# ПОММА НУРБЕРДЫЕВ

*Туркмени*

## АТĂ

Хамăн аттăмăн тĕпне эп пăхсанах —
Кашни утăм, кашни кун аса килет.
Унпала эп çул çўрерĕм самаях,
Темиçе çĕр ял-хула умран иртет...

Кавказри ăста тĕп хучĕ аттăма,
Донбасс урлă эпĕ çитрĕм Киева.
Хăратмарĕ шăтăр-шатăр шартлама,
Шыв витмерĕ, — атă тўсрĕ пит аван.

Белорус пĕр саплăк лартрĕ те хĕлле
Польша урлă тухрăм Одер хĕррине.
Урана тăван çĕршыв ăшшипеле,
Аттăм, ăшăтрăн ялан эс ун чухне.

Чăл та пар тăшман таратчĕ сурăхла,
Урисем хăшин юлатчĕç аттипех...
Манăн аттăм шав утатчĕ малалла.
Ак, ялавăмăр Берлин çинче тинех!

Тăшмана çĕнсе эп таврăнтăм киле,
Аттăн ют тусанне тăкрăм силлесе;
Хыврăм, шăлтăм та, мускав ваксипеле
Çутатса ăна эп лартрăм кĕтессе.